**Хĕллехи каç**

Анне арлать. Вар-сӳсĕн çипĕ
Йĕрлет пĕр вĕçĕмсĕр йĕре.
Сĕм юмахри усал ачи пек,
Çилсем ӳлеççĕ мăрьере.
Пӳрт умĕнчи лаштра юманăн
Тураттисем вăрçаç силе,
Ĕмĕрĕнче те шик пулман ун,
Ларать вăл тĕрĕс-тĕкелех.
Пирĕн лутра пахчалăх витĕр
Кил хушшине юр хĕвтерет.
Çутăласпа çил-тăвăл иртĕ,
Тухса çул уçăп иртерех.

Çемçен те ăшшăн йăлтăрать ав
Çап-çутă лампа, ĕмĕт пек.
Эп харсăр Пушкина вулатăп,
Çунатăп унăн хĕмĕпе.

Анне арлать. Вар-сӳсĕн çипĕ
Йĕрлет пĕр вĕçĕмсĕр йĕре.
Сĕм юмахри усал ачи пек,
Çилсем ӳлеççĕ мăрьере.

1937

*Ивник, И. Хĕллехи каç / И. Ивник // Чăваш сăмахлăхĕ : 10-мĕш класăн вĕренӳпе вулав кĕнеки / Н.Г. Иванова, В. П. Никитин, С. С. Самсонова пухса хатĕрленĕ. – Шупашкар, 1996. – II пай. - С. 29-210.*